27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944 МАЙ 7 ВЫРСАРНИКУН 90(6585) №

# Чăваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

## Вӗренӳ ҫулӗн ответлӑ тапхӑрӗ

Совет шкулӗ Тӑван ҫӗршыв умӗнче хӑйӗн ҫулталӑкри ӗҫӗшӗн отчет тума хатӗрленет. Майӑн 20-мӗшӗнче шкулсенче пӗлӳ тӗрӗслевӗсем пуҫланаҫҫӗ.

Пӗлӳ тӗрӗслевӗ вӑхӑтӗнче шкулӑн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи виҫҫӗмӗш вӗренӳ ҫулӗнчи ӗҫӗсене пӗтӗҫтерсе, вӗренекенсем мӗнле пӗлӳ илнине, учительсемпе шкул директорӗсем тата сутӗҫ органӗсем ҫамрӑк ӑрӑва пӗлӳпе воспитани парас тӗлӗшпе мӗнле ӗҫленине пӑхса тухаҫҫӗ.

1943—44-мӗш вӗренӳ ҫулӗ шкул пурнӑҫӗнче паллӑ улшӑнусем пулнипе палӑрса тӑрать. Хуласенче хӗрачасемпе арҫын ачасене уйрӑмӑн вӗрентни, вӗренекенсен хӑйсене тыткаламалли правилисене ӗҫе кӗртни, вӗренекенсемпе учительсем хушшинче вӗренӳ ыйтӑвӗнче социализмлӑ ӑмӑртӑва пӑрахӑҫа кӑларни, пӗлӳ пахалӑхне цифрӑсемпе хакламалла тунн тата ытти чылай мероприятисем,— ҫаксем пурте вӗренӳпе воспитани ӗҫне лайӑхлатма майсем туса пачӗҫ. Учительсемпе шкул директорӗсем, сутӗҫ органӗсем, комсомол тата профсоюз организацийӗсем ҫак паха мероприятисене пурнӑҫа кӗртессишӗн тимлӗн тӑрашнӑ ҫӗрте ӳсӗмсем те сахал мар.

Ҫӗмӗрле районӗнчи Чӑваш Улхашри 7 ҫул вӗренмелли шкулта 6-мӗш класра вӗренекенсем вырӑс чӗлхипе ҫирӗп пӗлӳ илнӗ тесе ним иккӗленмесӗрех калама пулать. Учительница Ефименкова юлташ ачасене вӗрентес ӗҫе хӑйӗн мӗнпур пултарулӑхне парать. Унта кашни ача вӗренӳшӗн ответлӑха туйса тӑрать. Улатӑрти 7-мӗш номерлӗ шкулти учительсем те ачасене ҫирӗп пӗлӳ парасшӑн, тирпейлӗ пулма, дисциплинӑна пӑхӑнма, ӗҫе юратма вӗрентессишӗн ҫине тӑрса тӑрашаҫҫӗ. Вӗренӳ ҫулӗ тӑршшӗнех тимлӗн ӗҫленӗ учительсем шкулсем, пӗлӳ тӗрӗслевӗсене хӑйсен ӗҫӗн чаплӑ ҫимӗҫӗсене курӗҫ.

Анчах вӗренӳпе воспитани ӗҫсене вӑйлатма пулӑшакан мероприятисем пӗтӗмӗшле республикӑра пур ҫӗрте те тивӗҫлипе ӑнланса илмен-ха. РСФСР Сутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ вӗренекенсен пӗлӗвне цифрӑсемпе хакласси пирки татӑклӑ кӑтартусем панӑ. Апла пулин те Йӗпреҫ районӗнчи Сосновка шкулӗнче юлашки вӑхӑтчен пӗлӗве цифрӑсемпе хакласси ҫинчен кӑсман. Шӑхасан районӗнче пӗлӳ пахалӑхне пӗтӗмӗшле пӗлӳ процентпа хисепе илессине пӗтермен.

Уйрӑмах социализмлӑ ӑмӑртӑва пӑрахса кайрӑс ӗҫре ҫитменлӗхсем ҫук мар-ха. Йӗпреҫри пӗр шкулта: ӑмӑртӑва пӑрахӑҫларӑмӑр, теме хатӗр. Тӗрӗссине илсен унта ӑмӑрту условийӗсем мӗн юлашки вӑхӑтчен стена ҫинче тӑнӑ. Районри шкулсем ӗҫне тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑнӑ пулсан, вӗсене пулӑшу парса пынӑ пулсан, ун пек пулман пулӗччӗ. Кун пек тӗслӗхсем ытти шкулсенче те пур пулӗ.

Асӑннӑ ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе Чӑваш АССР Сутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ҫителӗксӗр ӗҫлет. Ку тарана ҫити те шкулсен ӗҫне тӗрӗслеме ҫӳрекен инструкторсем, Сутӗҫ Халӑх Комиссариачӗн пайӗсен аппаратӗнче шкул инспекторӗсем ҫитмеҫҫӗ, анчах Сутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ҫакӑнпа килӗшсе пурӑнать.

Вӗренӳ ҫулне ӑнӑҫлӑн вӗҫлессишӗн шкулсенче вӗренӳ ӗҫне тӗрӗс организацилени, пӗлӳ тӗрӗслевӗсене инструкципе ҫирӗп пӑхӑнса ирттерни пысӑк пӗлтерӗшлӗ. Учительсемпе шкул директорӗсене пӗлӳ тӗрӗслевӗсене вӗренӳпе воспитани ӗҫӗнчи мӗнпур ҫитменлӗхсене пӗтерме, пӗлӳ тӗрӗслевне кӑтартуллӑн ирттерме татӑклӑ мерӑсем йышӑнмалла.

Чи малтанах, пӗлӳ тӗрӗслевӗсене ирттерме план тӑвас пулать. Ҫав плана палӑртнӑ ӗҫсене пурнӑҫа кӗртме мӗн кирлисене пӗтӗмпех хатӗрлемелле. Пӗлӳ тӗрӗслевӗсем вӑхӑтӗнчи уроксен расписанийӗсене тата ҫулталӑк хушшинче вӗрентнине мӗнле ӑнланнине тӗрӗслеме тӗрӗслӳ билечӗсем туса хатӗрлемелле. Райсутӗҫ пайӗсен ҫар ӗҫне вӗреннӗ тӗлӗшпе тӗрӗслӳ ирттерме малтанах военкоматсемпе килӗшсе, тӗрӗслӳ ирттермелли срокӗсене палӑртса хумалла.

Вӗренекенсене пурне те тӗрӗслеве явӑҫтармалла тӑвас пулать. Ҫакна тума ача ашшӗ-амӑшӗсем хушшинче ӗҫлессипе вӑйлатни, дисциплинӑна ҫирӗплетни, ачасем хӑйсене тыткаламалли йӗркепе ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пыни кирлӗ. Пӗлӳ тӗрӗслевӗсене хатӗрленнӗ тата ирттернӗ вӑхӑтри пӗтӗм ӗҫӗн никӗсӗнче шкулсенче пӗлӳ тӗрӗслевӗ ирттересси ҫинчен кӑларнӑ инструкци пулмалла.

Вӗренекенсен пӗлӳлӗхне тӗрӗсленӗ вӑхӑтра вӗсем программа тӑрӑх мӗн чухлӗ пӗлнине тӗрӗс шута илсе хаклас пулать, ҫук пӗлӗвех ӳстерсе, ырласа кӑтартассине хирӗҫ татӑклӑн кӗрешмелле. Ҫакӑ вӑл вӗренӳпе воспитани ӗҫне сиен кӳрет.

Совет шкулӗ умӗнче тӑракан задачӑсене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе комсомол организацийӗсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. ВЛКСМ Центральный Комитечӗн XII-мӗш пленумӗ комсомолӑн шкулсенчи ӗҫӗсене лайӑхлатма татӑклӑ мероприятисем палӑртнӑ. Комсомол шкулсенчи организацийӗсен хисеплӗ задачи—вӗренӳпе воспитани ӗҫне лайӑхлатма учительсене пулӑшасси, вӗренекенсене ҫирӗп пӗлӳ парас, дисциплинӑна пӑхӑнтарас ӗҫре пулӑшасси. Тӑван ҫӗршыва хӗрӳ юратма вӗрентни нумай йывӑрлӑхсене тӳсме хатӗр граждансене ӳстерсе ҫитӗнтерессипе ҫыхӑннӑ. Ҫак задачӑна чыслӑн пурнӑҫа кӗртессишӗн комсомол организацийӗсен учительсен коллективӗсемпе ҫыхӑнса ӗҫлемелле. Комсомол организацийӗсем учительсемпе шкул директорӗсене пулӑшассишӗн пысӑк ответлӑх тытаҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл учительсем ҫине те пысӑк ответлӑх хурать. Учительсемпе директорсем комсомол организацийӗсене пулӑшма тивӗҫлӗ.

Пӗлӳ тӗрӗслевӗсене ирттерме пӗр уйӑх юлчӗ. Шкулсен руководителӗсен, учительсен, комсомол организацийӗсен шкулсенче вӗренӳ ҫулне лайӑх вӗҫлессишӗн пӗтӗм вӑя памалла.

Пӗлӳ тӗрӗслевӗсем — вӗренӳ ҫулӗн ответлӑ тапхӑрӗ. Пӗлӳ тӗрӗслевӗсене лайӑх хатӗрленсе ирттерер, вӗренӳ ҫулне лайӑх вӗҫлер! Фронтри пичченсене асла Сталин ҫамрӑк ӑру умне лартнӑ задачӑсене лайӑх пурнӑҫланипе савӑнтарар!

## ВЛКСМ Центральный Комитетӗнче

ВЛКСМ Центральный Комитечӗ хӗрарӑм трактористкӑсемпе хӗрарӑмсен тракторнӑй бригадисен 1943 ҫулхи ялхуҫалӑх ӗҫӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухнӑ. Ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартнӑшӑн П. М. Маркиянов юлташ ертсе пыракан (Йӗпреҫ МТС-ӗ), А. Г. Скворцова юлташ ертсе пыракан (Куславкка МТС-ӗ), И. П. Петрова юлташ ертсе пыракан (Тӑвай МТС-ӗ), Г. Н. Стрункова юлташ ертсе пыракан (Елчӗк МТС-ӗ) трактор бригадисене ВЛКСМ Центральный Комитечӗн Хисеплӗ грамотине памалла тунӑ.

Хӗрарӑм трактористкӑсенчен Мария Муракова (Элӗк МТС-ӗ), Таисия Ильина (Вӑрнар МТС-ӗ), Мария Михайлова (Йӗпреҫ МТС-ӗ), Анастасия Васильева (Тӑвай МТС-ӗ), Таисия Алексеева (Красноармейски МТС-ӗ), Мария Петрова (Вӑрмар МТС-ӗ), Нина Иванова (Шӑхасан МТС-ӗ), Наталия Мефедьева (Первомайски МТС-ӗ), Нина Гордеева (Елчӗк МТС-ӗ), юлташсене ВЛКСМ Центральный Комитечӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑланӑ.

Кунсӑр пуҫне 54 ҫынна СССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн «Отличник социалистического сельского хозяйства» значекӗпе наградӑланӑ.

### Агитаторсем хире тухрӗҫ

ЭЛЕК. (Хамӑр корр.). ВКП(б) райкомӗ ҫураки вӑхӑтӗнче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе организацилес тӗлӗшпе план туса ҫирӗплетнӗ. Вӑл плана пур агитколлективсемпе пуҫламӗш парторганизацисем патне ҫитернӗ. Кӑҫалхи ҫуракинче уйхир ӗҫне агитаторсемпе вулавҫӑсем пӗтӗмпе 450 ҫынна яхӑн хутшӑнмалла. Вӗсен шутӗнче коммунистсемпе комсомолецсем кӑна мар, учительсем те чылай. Партипе комсомол организацийӗсем ҫук ҫӗрте агитаци ӗҫне учительсем туса пыраҫҫӗ. Вӗсем колхозниксене ҫӗршывра пулса иртекен хыпарсемпе паллаштараҫҫӗ, стена хаҫачӗсем тата боевой листоксем кӑлараҫҫӗ, кӑтарту хӑмисем организацилеҫҫӗ.

Партин Вырӑс Сорминчи «Доброволец» колхозри пуҫламӗш организацийӗ уйра ӗҫлекенсем хушшинче агитаци ӗҫне туса пыма ятлӑ активна анлӑн явӑҫтарнӑ. Кунта кашни бригада ҫумнех иккӗшер агитатор ҫирӗплетнӗ. Ҫуракин малтанхи кунӗсенчех вӗсем колхозниксене фронтри хыпарсемпе паллаштарчӗҫ, уйра тӑракан задачӑсем ҫинчен каласа пачӗҫ. Учительница Бычкова юлташ май уявӗ тӗлне стена хаҫачӗ кӑларчӗ.

Ҫитес кунсенче ВКП(б) райкомӗ вырӑнсенче агитаторсемпе вулавҫӑсене пухса канашлусем ирттерме палӑртнӑ. Унта ҫуракин малтанхи кунӗсенче агитмассӑллӑ ӗҫе мӗнле организацилени ҫинчен сӳтсе явасҫӗ.

# Совет патриочӗсем, заем укҫине срокчен тӳлесе, тӑшмана ҫӗмӗрсе тӑкас вӑхӑта хӑвӑртлатар!

*Елчӗк районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ В. В. Зайцев ҫӗнӗ заема 30.000 тенкӗлӗх, Шӑхасан районӗнчи „Победа" колхоз председателӗ И. З. Захаров тата ҫав колхозри колхозник П. О. Осипов—25,000-шер тенкӗлӗх туянна*

### Заем укҫине тӳлеҫҫӗ

МУРКАШ. Свердлов ячӗпе тӑракан колхоз членӗсем пурте ҫӗнӗ заема ҫырӑнса илчӗҫ. Унта 1000 тенкӗрен кая ҫырӑннӑ колхозник пачах та ҫук.

Колхоз председателӗ Т. Налимов юлташ 5.000 тенкӗлӗх, колхоз счетоводӗ Ковалева юлташ 5000 тенкӗлӗх, колхозник Д. Вязов юлташ 4000 пин тенкӗлӗх ҫырӑнса укҫине ҫийӗнчех тӳлерӗҫ. Колхозниксем ҫӗнӗ заема кӗске вӑхӑтрах 64.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса укҫине пӗтӗмпех тӳлесе татрӗҫ.

Атапай ялсоветӗнчи «Крестьянин» колхоз членӗсем ҫӗнӗ Заема 74.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса 40.000 тенкине перекет кассине хыврӗҫ. Колхоз председателӗ М. Вязов юлташ 15.000 тенкӗлӗх, бригадирсем Е. Королькова, И. Садовников, ферма заведующийӗ О. Кожевникова, зоотехник А. Ступин, конюх А. Ландышева 5-шер пин тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. 67 ҫулхи колхозник В. Воробьев юлташ 4.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ.

**Т. ИВАНОВ.**

* * *

КӲКЕҪ, майӑн 6-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Заем сарасси пур ялсоветсемпе колхозсенче те пысӑк ҫӗкленӳпе иртсе пырать. Шортикасси ялсовечӗ 300.000 тенкӗлӗх, Шемшер ялсовечӗ 400.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине ҫийӗнчех тӳлерӗҫ. Ҫавӑн пекех «Правда» колхоз членӗсем 211.000 тенкӗлӗх, «Майӑн 1-мӗшӗ» колхоз членӗсем 105.000 тенкӗлӗх заем ҫырӑнса, облигацийӗсене алла илчӗҫ. «Красная Армия» колхозра Отечественнӑй вӑрҫӑ инваличӗ А. Леонтьев юлташ 5.000 тенкӗлӗх, Л. Ефимов юлташ 8.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине ҫийӗнчех тӳлерӗҫ.

Ҫӗнӗ заема ҫырӑнас ӗҫ служащисем хушшинче те активлӑн пырать. Райсоюзра ӗҫлекенсем пурте икӗ уйӑхри ӗҫ укҫи чухлӗ, Апашри вӑтам шкулта вӗрентекенсем пӗр уйӑхри ӗҫ укҫи чухлӗ ҫырӑнса, укҫине пӗтӗмпех тӳленӗ.

**Т. ЛОГИНОВ.**

## Ҫӗнӗ заема республикӑра 177.222 пин тенкӗлӗх сарнӑ

**Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне сарас ӗҫ пысӑк ҫӗкленӳпе малалла пулса пырать. Республикӑра майӑн 7-мӗшӗ тӗлне 177 миллион та 222 пин тенкӗлӗх сарнӑ, укҫине 81 миллион та 872 пин тенкӗ хывнӑ.**

**Ҫӗнӗ заема вырнаҫтарас тӗлӗшпе Вӑрмар, Красноармейски, Октябрьски, Сӗнтӗрвӑрри, Чурачӑк, Ҫӗрпӳ, Шупашкар районӗсем тата Шупашкар хули малта пыраҫҫӗ. Вӑрмар районӗнче 7.863.000 тенкӗлӗх сарнӑ, укҫине 7.309.000 тенкӗ пухнӑ.**

**Анчах ҫӗнӗ заема вырнаҫтарас енӗпе Йӗпреҫ, Кувакино районӗсем кая юлса пыраҫҫӗ-ха. Йӗпреҫ районӗнче заема 3.651.000 тенкӗлӗх ҫеҫ сарнӑ.**

**Хӑшпӗр районсенче заем укҫине пухасси питех те ҫителӗксӗр хӑвӑртлӑхпа пырать. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах Йӗпреҫ, Шӑхасан, Хӗрлӗ Чутай, Пӑрачкав, Канаш районӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ. Хӗрлӗ Чутай районӗнче, сӑмахран, заема 7 миллион тенкӗлӗх сарса укҫине 2 миллион та 864 пин тенкӗ ҫеҫ пухнӑ.**

**Ҫӗнӗ заема вырнаҫтарнипе пӗр вӑхӑтрах унӑн укҫине вӑхӑтра пухассишӗн ҫине тӑрса кӗрешер!**

### *Эпир хыван кашни манет— ҫӗршывӑмӑр вӑйне ҫӗклет!*

Эпир хыван кашни пӗр пус —
Ҫӗршывшӑн вӑл, хисеплӗ тус!

Эпир хыван кашни манет —
Ҫӗршывӑмӑр вӑйне ҫӗклет.

Эпир хыван кашни пинех —
Танксем парать кун хыҫҫӑн кун.

Эпир хыван кашни мӗльюн—
Ҫӗршывшӑн вӑл тӗрек хӑех.

Эпир хыван кашни мӗльярд —
Пин-пин снаряд пулса тӑрать.

Апла пулсан, кашни калар:
«Ҫӗршыв чӗнет-ҫке, пулӑшар!

Ҫӗршыв вӑл — эп, ҫӗршыв вӑл—эс,
Тӗнче мурне часрах ҫӗнес!»

Мучи, енчӗксене салтар,
Юлташ, пӑртманете уҫӑр!

Патшалӑха, кивҫенлесе,
Пиншер парар, хӗпӗртесе!

Пиртс пӗр ӗмӗт, пӗр канаш,
Малти шутра ӗҫчен чӑваш.

Пӗри ан юлтӑр пӑрӑнса,
Йыш ӗҫӗ—тивӗҫлӗ чыса!

Ҫав йытӑ нимӗҫе лӑска!
Эпир хыван мӗнпур укҫа

Сана вӑй патӑр, Хӗрлӗ Ҫар!
Ҫаплах эс паттӑр ут, васка.

Эпир хывнӑ мӗльюн, мӗльярд —
Ҫӗршыв чапне ҫӳле хӑпарт!

Хӗҫпӑшалтан эс хурҫӑ сап,
Фашист пуҫне аҫа пек сап!

Тасалтӑр ҫӗрӗмӗр ҫинчен,
Ан тухтӑр вил шӑтӑкӗнчен,

Вӑл ҫӗртӗр шӑршлӑ масарта!
Юлташ, хӑватлӑх — хамӑра!

**СТИХВАН ШАВЛИ.**

### 30.000 тенкӗлӗх

ЕЛЧӖК, майӑн 6-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ инваличӗ, Аслӑ Пӑла Тимешӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан Хӗрлӗ ялавлӑ колхоз председателӗ В. В. Зайцев Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне 30.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ.

### Заем укҫи пухасси юлса пырать

ШӐХАСАН, майӑн 6-мӗшӗ. **(Телефонпа, хамӑр корр.).** Районри ӗҫҫыннисем ҫӗнӗ заема икӗ кун хушшинче 3 миллион та 500 пин тенкӗлӗх ҫырӑннӑ. Нумай колхозниксемпе колхозницӑсем заем ҫырӑннӑ вӑхӑтра хӑйсен пысӑк активлӑхне, хӑйсем ҫӗнтерӳшӗн нимӗн те шеллемесӗр тӑнине кӑтартса пачӗҫ.

Ухманти «Победа» колхоз председателӗ И. З. Захаров юлташ ҫӗнӗ заема 25.000 тенкӗлӗх, ҫавӑн пекех колхозник Павел Осипов 25.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса, укҫине ҫийӗнчех тӳлерӗҫ. Отечественнӑй вӑрҫӑ инваличӗ А. Петров юлташ ҫӗнӗ заема 5.000 тенкӗлӗх туянчӗ. Ҫавӑн пекех Енӗшри Максим Горький ячӗпе тӑракан колхозӑн председателӗ К. Афанасьев тата Атнашри Киров ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ В. Степанова юлташсем 20-шер пин тенкӗлӗх ҫырӑнса илнӗ.

Анчах та заем укҫине пухасси районра сӳрӗк пырать-ха. Ку таранччен пурӗ те 2 миллион та 864 пин тенкӗ кӑна пухнӑ. Матьшӳри «Молодой колхозник» колхоз членӗсем 105.000 тенкӗлӗх ҫырӑннӑ, 70.000 тенкине кӑна пухнӑ. Ҫавӑн пекех Сталин ячӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсем те 65.000 тенкӗлӗх ҫырӑнса 23.000 тенкине ҫеҫ пухнӑ.

Районри партипе комсомол организацийӗсен, финанс работникӗсен тата ытти пӗтӗм общественноҫӑн, вӑхӑта вӑраха ямасӑр, заем укҫи пухас тӗлӗшпе юлса пырассине пӗтермелле.

**С. ШАДИН.**

## *Вӑйлӑ тырпулшӑн пыракан Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑрту*

### Малта пыракан колхозсенче

ЕЛЧӖК. Районри пур колхозсем те, Калинин ялсоветӗнчи «Красный путиловец» колхоз членӗсем чӗнсе каланине йышӑнса, Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ. Колхозсенче ҫураки ӗҫӗ хӗрсех пырать. Паянхи кун тӗлне районӗпе тӗштырӑсемпе пӑрҫа йышши тырӑсене акассине 39 процент тултарнӑ. Мӗнпур культурӑсене илсен, 6294 гектар акнӑ.

Аслӑ Пӑла Тимӗшӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз хыҫҫӑн «Ново Ищеряково», «Красное знамя», Дзержинский тата Пушкин ячӗпе тӑракан колхозсем ирхи тырӑсене акса пӗтернӗ.

Сӑрьелӗнчи «Марс» колхоз та пӗрчӗллӗ тата пӑрҫа йышши тырӑсене ыранпаянах акса пӗтерет. Паянхи куна 421 гектар акнӑ.

ВӐРНАР. Майӑн 6-мӗшӗ тӗлне районӗпе 2496 гектар сухаланӑ, 1607 гектар акнӑ. Колхозсем кӑҫал ӗҫе пахалӑхлӑ тӑвасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ. Агромероприятисене кашни колхозрах пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. Вӑрлӑх валли уйӑрнӑ ыраш калчисен участокӗсене пур колхозсенче те тенӗ пекех тислӗк шӗвекӗпе, кӗлпе тата ытти удобренисемпе апатлантараҫҫӗ. Вӗсене уйрӑм звеносем ҫумне уйӑрнӑ. Районӗпе 1257 гектар ҫинче кӗр калчисене апат панӑ.

Ҫурхи тырӑсене акас ӗҫре «Победа» колхоз (председателӗ П. Андреев юлташ) малта пырать. Паянхи кун тӗлне унта 165 гектар акнӑ, 250 гектар сухаланӑ. Ҫак колхоз ҫывӑх кунсенчех пӗрчӗллӗ тата пӑрҫа йышши тырӑсене акса пӗтерет.

**Агроном СИНИЦЫНА.**

### Сухаҫӑсем ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерчӗҫ

СӖНТӖР, майӑн 4-мӗшӗ. **(Телефонпа).** «Коммунар» колхоз членӗсем Верховный Главнокомандующин Совет Союзӗн Маршалӗн Сталин юлташӑн приказне хавасланса кӗтсе илчӗҫ. Агитаторсем вӑл приказа сухаҫӑсемпе сӳреҫӗсене хирте тӗплӗн ӑнлантарса параҫҫӗ.

Вӑрҫӑ инваличӗ агитатор Иван Толстовӗнер Сталин юлташӑн приказне сухаҫӑсене вуласа пачӗ.

Сталин юлташӑн приказне ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн сухаҫӑсем ӗҫ хӑвӑртлӑхне ӳстерчӗҫ. И. Семенов, А. Янгачева, М. Кулькова, Н. Кириллов колхозниксем кулленхи нормӑна 150—200-шер процент тултарса сухалаҫҫӗ.

**М. КАРПОВ.**

### Ӗҫ ҫине ҫиелтен пӑхакан агрономсем

Октябрьски райҫӗрӗҫ пайӗн агрономӗ Хлебникова тата МТС-ӑн участокри агрономӗ Кузьмина юлташсем хӑйсене ҫирӗплетсе панӑ колхозсенче ҫураки ӗҫӗсене пачах ҫителӗксӗр ертсе пыраҫҫӗ, агротехникӑллӑ мероприятисене пӑснине ҫийӗнчех асӑрхамаҫҫӗ, вӗсене пӗтермелли мерӑсене вӑхӑтра йышӑнмаҫҫӗ. Вӗсем колхозниксене ҫуракине агротехникӑна пӑхӑнса ирттерме организацилес вырӑнне ҫаклӑ вӑхӑта канцеляририсенче ларса ирттереҫҫӗ, ҫуракин хӑй тӗллӗн пулса иртессе шанаҫҫӗ. Ҫуракине хатӗрленнӗ вӑхӑтра та канцеляринче ларса производство планӗсем туниcӗр пуҫне нимех те туман, агротехника мероприятийӗсене колхозниксем хушшинче тӗплӗн сӳтсе явман. Ҫавна пулах ӗнтӗ Хлебникова юлташа ҫирӗплетсе панӑ «Новая жизнь» колхозра 10 гектар лаптӑка 8—9 сантиметр тарӑнӑшӗ ҫеҫ, ҫитмеллине тата шӑйрӑклӑ сухаланӑ. Ку колхозра вӑрлӑх участокӗ валли ҫӗр те уйӑрман.

Кузьмина юлташа ҫирӗплетсе панӑ «Новый быт» колхозра 3 гектар пӑрҫа 2 гектар ҫӗлӗ сухаламан вырӑна акнӑ. Ҫапла вара агротехникӑна пӑснӑ. Хлебниковӑпа Кузьмина юлташсем агротехникӑна пӑсакансене хирӗҫ пачах ҫителӗксӗр кӗрешеҫҫӗ.

Ӗҫ ҫине ҫакнашкал ответлӑхсӑр пӑхнӑшӑн, ҫураки ӗҫӗсене пултӑрӗн ертсе пыманшӑн, агротехника правилисене пӑснине асӑрхаманшӑн Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ Малов юлташ Хлебниковӑпа Кузьмина юлташсем пирки ятарласа приказ панӑ, унта вӗсене ятланӑ.

Хлебниковӑпа Кузьмина юлташсене ҫывӑх кунсенчех ӗҫри ҫитменлӗхсене пӗтерме, ҫуракине пур колхозсенче те малта пыракан агротехникӑна пӑхӑнса туса ирттерме хушнӑ. Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ агрономсене ҫӗре лайӑх хатӗрлесси, сеялкӑсемпе акасси, вӑрлӑха тӑпрапа лайӑх витӗнтерсе хӑварасси ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫаврӑнса пӑхма хушнӑ. Вӑрлӑх участокӗсем валли чи лайӑх ҫӗрсене уйӑрса хумалли ҫинчен асӑрхаттарнӑ.

### Хӗрлӗ Ялав—Кузьмин аллинче

КОМСОМОЛЬСКОЕ, майӑн 6-мӗшӗ. **(Телефонпа).** «Трактор» колхоз районра пысӑк колхозах мар. Апла пулин те унта комсомолецсем йышлӑн — ҫирӗм виҫҫӗн. ВЛКСМ организацин секретарӗ пулса колхоз бригадирӗ Павлова юлташ ӗҫлет. Хастарлӑ хӗрача вӑл. Унӑн бригади ялан малта.

Ӗҫчен бригадирӗн ӗҫӗ те ӑнса пырать. Вӑл ертсе пынипе халӗ 15 комсомолец (7-шӗ ӗне ферминче ӗҫлеҫҫӗ) тӳрремӗнех уйхир ӗҫӗсене хутшӑнаҫҫӗ. Вӗсем суха тӑваҫҫӗ, акаҫҫӗ, сӳрелеҫҫӗ. Хире ирхине 2 сехетре тухса каҫхине 10 сехетчен ӗҫлеҫҫӗ.

Ялхуҫалӑх ӗҫне ӑнӑҫлӑн туса ирттерес тӗлӗшпе колхозра куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялав тунӑ. Вӑл ялава халӗ чи лайӑх сухаҫӑ-комсомолец Герасим Кузьмин тытса тӑрать. Вӑл кунне 1,25 гектар сухалас вырӑнне 1,74 гектар сухалать.

Комсомол организацийӗ пуҫарнипе колхозра клуб уҫрӗҫ. Унта халь хор тата драма дружокӗсем ӗҫлеҫҫӗ. Клубра каҫсерен вечерсем, докладсемпе калаҫусем ирттереҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне комсомолецсухаҫӑсем кашни бригадӑрах кашнӑ вӑхӑтра хаҫат-журналсем вуласа параҫҫӗ, калаҫусем ирттереҫҫӗ.

**М. ЛУКИНА,**
**ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ.**

### Тракторсем кирлӗ пек ӗҫлемеҫҫӗ

Ҫураки ӗҫӗсен хӗрӳллӗ кунӗсем пыраҫҫӗ. Халь кашни сехет хаклӑ. Анчах та республикӑри уйрӑм МТС-сем ҫураки ӗҫне ҫак вӑхӑта ҫитсе те кирлӗ пек хутшӑнман-ха.

Шупашкар МТС-ӗн (директорӗ Смирнов юлташ) майӑн 1-мӗшӗ тӗлне 4 трактор картишӗнчех ларнӑ. Вӗсем ӗҫре усӑ курма юрӑхсӑр пулнӑ, 5 трактора ӗҫе тытӑниччӗнех юсама тивнӗ.

Кӑкарса ӗҫлемелли машинӑсем те ӗҫе хатӗр мар. Сӑмахран, «Урожай» колхозри тракторпа акмалли сеялка, юсавлӑ пулман пирки, ӗҫе тытӑнман.

Сӗнтӗр МТС-ӗн (директорӗ Чупраков) 10-мӗш бригадиче (бригадирӗ Исаев юлташ) СТЗ маркӑллӑ трактора ӗҫе тытӑниччӗнех юсама тивнӗ. Ҫак бригадӑри тепӗр трактор, кӑкарса ӗҫлемелли плуг пулман пирки, майӑн 4-мӗшӗччен ларнӑ. 7-мӗш номерлӗ бригадӑра СТЗ-НАТИ маркӑллӑ трактор, подшипникӗсем ирӗлнӗ пирки, ӗҫлемесӗр ларать. Тракторсене юсама тимӗрҫӗ лаҫҫисенче кӑмрӑк та ҫук. Ҫапла вара, ҫаврӑнӑҫусӑр руководительсене пула 7-мӗш бригада майӑн 3-мӗшӗ тӗлне ҫураки планне пурӗ те 8 процент кӑна тултарнӑ. Ҫав вӑхӑтрах Фомин юлташ ертсе пыракан 2-мӗш бригада ҫураки вӑхӑтӗнче ӗҫлемелли плана 20 процент ытла тултарнӑ. Ҫак бригадӑри П. Кошкин тракторист кулленхи нормӑна 150 процент тултарать. Е. Владимирова, Е. Чекменева, А. Кабуркина трактористкӑсем нормӑна 125 процент тултараҫҫӗ. МТС директорӗ Чупраков ытти бригадӑсенчи трактористсене ҫак трактористсен опычӗпе паллаштарас тӗлӗшпе нимӗн те туман.

Шупашкар тата Сӗнтӗр МТС-ӗсенче горючие перекетлес пирки нимӗн те туман. Витресем, варинккесем, насоссем ҫитмеҫҫӗ. Сӑмахран, Шупашкар МТС-ӗн 7-мӗш бригадинче 4 трактор валли пурӗ те 2 витре те пӗр варинке тата пӗр качок кӑна. Горючи хунӑ пичкесене витмелли щитсем туман, пичкесем уйра хӗвел ҫинчех выртаҫҫӗ, вӗсен айне те, ҫине те нимӗн те хуман.

Ӗҫре пулнӑ сӗрмелли ҫусене пухмаҫҫӗ. Ҫак икӗ МТС-ра куҫса ҫӳрекен мастерскойсем организацилемен.

Ҫакӑн пек ҫитменлӗхсем Канаш МТС-ӗнче те пур. МТС директорӗ Зайцев юлташ тракторсене кирлӗ пек ӗҫлеттерессишӗн тӑрӑшмасть. «Мотор» колхозра ҫураки пуҫланнӑранпа та МТС-ӑн тракторӗсем 30 гектар кӑна сухаланӑ. Кунта та тракторсен моторне ӗҫлеттерме горючи ҫук тесе лараҫҫӗ.

Ҫакӑн пек ҫаврӑнӑҫусӑр тата тимсӗр ӗҫленӗшӗн Шупашкар МТС-ӗн директорне Смирнов юлташа, Сӗнтӗр МТС-ӗн директорне Чупраков юлташа Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссарӗ хытӑ ятланӑ, ҫак ҫитменлӗхсене кӗске вӑхӑтрах пӗтермесен, вӗсене хытӑрах айӑпласси ҫинчен асӑрхаттарнӑ.

Тракторсем уйра талӑкра 20 сехетрен кая мар ӗҫлемелле, трактористсен икӗ сменӑпа ӗҫлеме пуҫламалла. Трактористсене яланах пулӑшу парас майпа, механиксене трактор бригадисем ҫумне ҫирӗплетсе, тракторсене юсас ӗҫе хытӑрах организацилемелле.

# Совет Информаци Бюровĕнчен

## МАЙĂН 5-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

**Майăн 5-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусем пулман.**

**Майăн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕн пур фронтсенче нимĕçсен 35 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 74 самолетне персе ӳкернĕ.**

☆ ☆ ☆

### ХУРА ТИНĔС ФЛОЧĔН КАРАПĔСЕМПЕ АВИАЦИЙĔ ТĂШМАН СУДНИСЕНЕ ПЫРА-ПЫРА ÇАПНИ

Майăн 3-мĕшĕнче кăнтăрла тата майăн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн сывлăшри разведка тинĕсре тăшман транспорчĕсен темиçе ушкăнне асăрханă.

Хура тинĕс флочĕн карапĕсем Херсон маякĕнчен хĕвеланăçнерехре тăшман судниссне икĕ хутчен пырса çапнă. Торпедăсем ярса, тăшманăн 2 баржине тата 3.000 тонна таякан транспортне шыва путарнă.

* * *

Флот авиацийĕ кăнтăрла та, çĕрле те тăшманăн çав асăрханă транспорчĕсене тата тинĕсре çӳремелли ытти суднисене умлăн-хыçлăн пыра-пыра çапнă. Бомбăсем тӳрĕ пырса лекнипе пĕтĕмпе 10.000 тонна таякан 4 транспорта, хăвăрт çӳрекен 2 десант баржине, типĕ груз турттаракан пĕр баржăна тата хурал катерне шыва путарнă. Тăшманăн ытти нумай суднисене сиенленĕ.

* * *

Станислав хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшман пехоти пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Икĕ сехет хушши çапăçсан, нимĕçсем каялла чакнă, çапăçу хирĕнче вĕсен салтакĕсемпе офицерĕсен 300 вилли таран выртса юлнă. Тепĕр участокра пĕр çăсăн разведка отрячĕсем кĕтмен çĕртен пырса çапнă та тăшманăн темиçе дзотне тытса илнĕ.

* * *

Тирасполь хулинчен кăнтăртарахра пĕр çăсăн подразделенийĕсем çапăçса пирĕн позицисене разведка тума хăтланнă. Совет боецĕсем тăшман траншейисене вăркăнса кĕнĕ те гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 8 пулемет, танксене пемелли 3 пăшал тата 60 винтовкăпа автомат тытса илнĕ.

Старши лейтенант Голчин ертсе пыракан летчиксем боевой заданирен таврăннă чухне нимĕç самолечĕсен пĕр ушкăнне тĕл пулнă. Совет штурмовикĕсем тăшмана атакăланă та сывлăшри çапăçура нимĕçсен «Юнкерс—87» йышши 6 бомбардировщикне персе ӳкернĕ. Пирĕн пур самолетсем те хăйсен аэродромне таврăннă.

* * *

Украинăри 1-мĕш фронтра юлашки 10 кун хушшинче 16-мĕш, 18-мĕш, 21-мĕш, 24-мĕш, 201-мĕш çăмăл пехотнăй дивизисенчен, 1-мĕш горно-стрелковăй бригадăран тата 2-мĕш танковăй дивизирен венгерсен 600 салтакĕпе офицерĕ хăйсен ирĕкĕпе тыткăна парăннă. Тыткăна парăннисем каланă тăрăх, венгер салтакĕсем нумайĕшĕ нимĕçсене кураймаççĕ. Тыткăна парăннисем пурте Хорти регента венгер халăхне сутнă çын вырăнне шутлаççĕ. Вĕсем çапла каласа панă: нимĕçсем венгерсене каялла чакма чаракан отрядсем тунă, çав отрядсене çапăçура венгерсем хăйсене хăйсем мĕнле тытнине сăнаса тăма тата венгерсем каялла чакас пулсан вĕсене персе вĕлерме хушнă. Тыткăна парăннă венгер салтакĕсенчен нумайĕшĕ хăйсем нимĕçсене курайманнине çинчен, вĕсем хăйсен тăван çĕршывне ирĕке кăларассишĕн нимĕçсене хирĕç кĕрешесси çинчен каласа панă.

* * *

Аялапах фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Каменец-Подольск облаçĕнчи Клембовка ялĕнче тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр. «Фашистла ирсĕрсем пирĕн яла йышăнсан, пĕрремĕш кунран пуçласах мирлĕ çынсене хаяррăн тыткалама, çаратма тата вĕлерме тытăнчĕç. Пĕлтĕрхи декабрь уйăхĕнче нимĕçсем кашни кун тенĕ пекех çынсене ухтаратчĕç, хресченсен тăрса юлнă хаклăрах япалисене пурне те тыта-тыта илетчĕç. Гитлеровецсем çамрăк çынсене пурне те вăйпа каторгăна хăваласа кайрĕç. Устинья Низовец колхозницăн икĕ ывăлĕпе пĕр хĕрне, Ефим Самчук колхозникĕн пĕр ывăлĕпе икĕ хĕрне, Петр Мазур колхозникĕн икĕ ывăлĕпе пĕр хĕрне Германие каторгăна хăваласа кайрĕç. Кашни çемьерен тенĕ пекех çавăн пек хăваласа кайнă. Ялтан тарса кайнă çынсем çеç фашистла пусмăрлăхран хăтăлчĕç. Хăйсем чакас умĕн гитлеровецсем 400 çурта ытла çунтарса ячĕç. Стариксене, чирлисене тата ялтан куçса кайма килĕшмен çынсене нимĕçсем пере-пере вĕлерчĕç. Клембовка поселокĕнче нимĕç ирсĕрĕсем мирлĕ çынсене пĕр çурта хăваласа пухрĕç те вĕсене унта çав тери тискеррĕн тыткаларĕç. Вĕсене нумайччен мăшкăлланă хыççăн нимĕçсем çав çурта унта хупнă стариксемпе, хĕрарăмсемпе тата ачасемпе пĕрлех çунтарса ячĕç. Вутра 76 çын пĕтрĕ».

Акт çине çаксем алă пуснă: колхозник Иван Дукач, сахăр заводĕнче ĕçлекен рабочи Иван Бондарчук, колхозницăсем Ольга Разумная тата Александра Низовец, учительница Зинаида Кирпа, колхоз председателĕ Антон Скрипнюк.

# Фашистла нимĕç захватчикĕсен тискер ĕçĕсене тĕпчесе палăртакан Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси

## фашистла нимĕç захватчикĕсем Ленинград облаçĕнчи Новгород хулипе Новгород районĕнче ишĕлтерни тата тискер ĕçсем туни çинчен

# пĕлтерни

Вырăссен авалхи хулине—Новгорода фашистла нимĕç захватчикĕсем йăлтах ишсе пĕтернĕ. Вĕсем историллĕ памятниксене çĕмĕрнĕ, памятниксен пĕр пайне оборона сооруженийĕсем тума сӳтнĕ.

Çав фактсене тĕпчесе пĕлме уйрăм комисси тунăччĕ. Комисси председателĕ — Т. Ф. Штыков, членĕсем — РСФСР Верховнăй Совечĕн депутачĕ К. Д. Белокурова, ĕçсынни депутачĕсен Новгород хули совечĕн исполком председателĕ М. В. Юдин, совет писателĕсен союзĕн правлени членĕ И. А. Груздев, Ленинградпа Новгород митрополичĕн представителĕ — Ленинград облаçĕнчи чиркӳсен благочиннăйĕ Н. И. Ломакин протоиерей, государство музейĕн авалхи вырăс искусстви отделĕн заведующийĕ Ю. М. Дмитриев, памятниксене сыхласа хăварас тĕлĕшпе ĕçлекен государство инспекцийĕн начальникĕ С. Н. Давыдов архитектор. Çав Комисси, документсене, свидетельсем каланине тата техникăлла экспертиза каланине пăхса тухса, фашистла нимĕç оккупанчĕсем Новгород хулине ишĕлтернине, унăн пĕтĕм тĕнчешĕн паха художествăллă пуянлăхĕсене пĕтерсе тăкнине, çавăн пекех тата мирлĕ совет гражданĕсем тĕлĕшпе тата Хĕрлĕ Çарăн тыткăна лекнĕ офицерĕсемпе боецĕсем тĕлĕшпе тискер ĕçсем тунине палăртнă.

Гитлеровецсем Новгород хулинче икĕ çул ытла хуçаланса пурăннă вăхăтра авалхи вырăс зодчествин ытти питĕ чаплă памятникĕсене те пĕтерсе лартнă. Çав памятниксенчен уйрăмах Кремлĕн авалхи башнисене хытă сиенленĕ; Кокуй башнин çурçĕр-хĕвелтухăç енчи кĕтессин çӳлти пайне тата Спас башнин аялти маччине ишĕлтернĕ; пилĕк башньăн çийĕсене çĕмĕрнĕ, Владимир башнин маччине шăтарнă. Фашистла нимĕç захватчикĕсем Кремльти XV—XVII-мĕш ĕмĕрсенче тунă авалхи çуртсене те ишсе тăкнă. Çав çуртсенче вĕсем казармăсем, салтак клубĕсем, хĕçпăшал мастерскойĕсем, складсем тата ыттисем те тунă.

Германин 18-мĕш армийĕн командующийĕ Линдеман генерал-полковник хушнипе, нимĕç ирсĕрĕсем Россия 1.000 çул тултарнине асăнса тунă памятнике сӳтсе, Германие яма хатĕрлесе хунă. Çав памятнике Кремль площадĕнче 1826-мĕш çулта лартнă, ăна вырăссен паллă скульпторĕн — Микешин академикăн проекчĕ тăрăх тунă пулнă.

Нимĕçсен 28-мĕш çăмăл пехотнăй дивизийĕнчи 49-мĕш егерски полкăн 10-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ старшина Иоганн Поде штабс-фельдфебель çапла каласа кăтартнă: «1944 çулхи январĕн пуçламăшĕнче эпĕ çав памятнике пайăн-пайăн салатса хунине, кашни пайĕ çине уйрăм номер çырса хунине куртăм. Эпĕ салтаксем çапла каланине илтрĕм: Линдеман генерал-полковник памятнике сӳтсе Германие ăсатма хушнă, терĕç вĕсем».

Фашистла нимĕç салтакĕсем çаратнине, вĕсен вандализмне кăтартакан çавăн пек каланисем сахал мар.

## Новгород хулине ишĕлтерни

Отечественнăй вăрçăччен Новгород хули наукăпа культурăн пысăк центрĕ пулнă. Унта вырăс искусствипе культурин историллĕ памятникĕсем пулнă. Унта СССР Наука академийĕн истори институчĕн филиалĕ, музей, учительсен институчĕ, медицина техникумĕ, автодорожнăй техникум, педагогика училищи, фельдшерпа акушерка шкулĕ тата фармацевтика шкулĕ пулнă.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем вырăссен авалхи хулине—Новгорода çунтарса янă, ишĕлтернĕ. Пурăнмалли 2.346 çуртран хулара 40 çурт çеç тăрса юлнă. Фашистсем Новгород хулинче апи-какай комбинатне, çăкăр комбинатне, атă-пушмак фабрикине, сĕтел-пукан фабрикипе металл шăрататакан завода, механически завода, суднăсем юсакан завода, йывăç çуракан завода, икĕ кирпĕч заводне, черепица заводне, судоверьфе, шкулта вĕренме кирлĕ хатĕрсем тăвакан фабрикăна, чугун çул деповне, НКПС-ăн ремонт мастерскойне ишĕлтернĕ; водопровода, шыв таптаракан станцие тата шыв уçлакан станцие юрăхсăра кăларнă; электричество хуçалăхне, хулари телефон станцине, почтăна, телеграфа, радиоузела çĕмĕрсе пĕтернĕ.

Хăйсем каялла чакнă чухне фашистсем музейран археологипе истори тата искусствăн питĕ сайра тĕл пулакан çав тери паха коллекцийĕсене илсе кайнă, музей çуртне тата унăн художество галерейине ишсе хăварнă; вĕсем наука библиотекине, СССР Наука академийĕн истори институчĕн филиалĕнчи питĕ сайра тĕл пулакан фототекипе библиографи картотекине çаратнă; учительсен институтне, техникумсене, педагогика училищине, медицина шкулĕсене, 5 клуба, 2 кинотеатра, Хĕрлĕ Çар çуртне, 1.040 çын вырăнаçакан театра, 3 больницăна, 5 амбулаторие, ача çуратмалли çурта, ача поликлиникине, 5 ача яслине, психиатри больницин тĕп корпусне ишĕлтернĕ, çунтарса янă.

Новгородра фашистла нимĕç оккупанчĕсем юри, малтан шухăшласа хунă план тăрăх ишĕлтернĕ. Ĕç çăнах та çапла пулнине нумай свидетельсем кăтартса параççĕ.

Нимĕçсен 1-мĕш авиаполевой дивизийĕнчи 3-мĕш батальонăн 9-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ старши ефрейтор Шмидт Пауль çапла кăтартса панă: «1943 çулхи сентябрь уйăхĕ пуçланиччен Волхов шывĕн сылтăм хĕрринче Новгородран Хутыне кайма çĕнĕ шоссе çулĕ турĕç. Çул тума кирлĕ материала Новгородран автомашинăсемпе илсе пыратчĕç, материал тупас тесе, хулари çуртсемпе сооруженисене аммоналпа сирпĕнтере-сирпĕнтере яратчĕç».

Пелагея Николаевна Дерюгина каланинчен нимĕç командованийĕ хулари чи лайăх çуртсене юри ишĕлтерни курăнать. Дерюгина çапла каласа панă: «1941 çулхи август уйăхĕнче нимĕçсем тыткăна лекнĕ совет çыннисене чул çуртсене сӳттерчĕç, кирпĕчĕсене чугун çулпа илсе каятчĕç; вĕсем ишĕлнĕ çуртсене мар, шăпах та лайăх çуртсене сӳттерчĕç».

Нимĕçсем çуртсене çеç ишĕлтермен, вĕсем тата çĕр айĕнчи сооруженисен оборудованине те ишĕлтернĕ тата çаратнă. Авиаполевой дивизири 2-мĕш батальонăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕ Кулик Вальтер çапла каласа панă: «1943 çулхи ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче эпĕ çакна куртăм: Новгородран Деревеници еннелле каякан çул çинче, Погорелиц районĕнче, арми сыхăнăвĕн салтакĕсем çĕр айĕнчи кабеле чавса кăларатчĕç. Çав салтаксем каланă тăрăх, пăхăр кабеле нимĕçсем Германие ăсатнă. Ноябрь уйăхĕнче салтаксем çав кабеле 25 километр тăршшĕ кăларнă».

## Новгородри историллĕ памятниксене çĕмĕрни

Фашистла нимĕç ирсĕрĕсем Новгородра авалхи вырăс искусствин калама çук чаплă памятникĕсене çĕмĕрсе пĕтерсе тăкнă. Юрьев монастырĕн Георгиевски соборĕнче (ăна XII-мĕш ĕмĕр пуçламĕшĕнче тунă) фашистсем собор башнин маччипе стенисене ишĕлтернĕ, çав стенапа мачча çинче XII-мĕш ĕмĕрте çырнă картинăсем пулнă.

XI-мĕш ĕмĕрте тунă Софийски собор вырăс зодчествин чи авалхи памятникĕсенчен пĕри пулнă, вăл тĕнчери искусствăн калама çук чаплă памятникĕ пулнă. XII-мĕш ĕмĕрте çырнă картинăсем, XII—XVII-мĕш ĕмĕрсенче çырнă иконсем, авалхи иконостассем тата ыттисем те пуррине пула çав собор авалхи вырăс искусствин пуянлăхне упраса тăнă. Собор çуртне нимĕçсем ишĕлтернĕ. Соборăн варринчи тăррине ишĕлтернĕ пирки штукатурка çине çырнă картинăсем йăлтах пĕтсе ларнă; çурçĕр-хĕвеланăç енчи тăрринчи купола тата стенан пĕр пайне ишĕлтернĕ. Нумай тĕлте стенасене витĕрех шăтарнă. Соборăн çурçĕр енчен кĕмелли пайĕнче темиçе маччана тата çӳлти пайне ишĕлтернĕ. Гитлеровецсем соборти япаласене пурне те çаратса кайнă, мĕн пур иконсене, иконостаса, авалхи паникадилсене, çав шутра Борис Годуновăн паникадилне те, илсе кайнă.

Çакна палăртнă: Софийски собора çаратас ĕçе нимĕçсен 1-мĕш авиаполевой дивизийĕн командирĕ Вильке генерал-майор ертсе пынă.

2-мĕш батальонăн 5-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ нимĕç—старши ефрейтор Кулик Вальтер çапла каласа кăтартнă: «1943 çулхи майăн 13-мĕшĕнче эпĕ Кремль урлă кайрăм, çавăн чухне нимĕç салтакĕсем чиркӳ тăрринчен ылттăнланă листасене сӳтсе илнине куртăм. Çĕр çинче пĕр тăваткăл метр пысăкĕш тата 2—3 миллиметр хулăмĕш листасем выртатчĕç. Вильке генерал-майор соборăн пусмисем çинче тăратчĕ, вăл салтаксем мĕн тунине сăнаса тăратчĕ. Вильке генерал-майорăн шоферĕ мана çапла каласа кăтартрĕ: Вильке генерал-майор батальон казначейне Штингофа çав ылттăнланă листасенчен Вильке валли турилккесем, бокалсем тата чей ĕçмелли савăтсем туса хатĕрлеме хушрĕ, терĕ».

XII-мĕш ĕмĕрте тунă благовещени чиркĕвĕн стенисем çине çав ĕмĕртех картинăсем çырса хунă пулнă. Çав чиркӳрен фашистсем дот тата казарма туса хунă. Алтарь чӳречисенче хĕçпăшалпа пемелли шăтăксем тунă. Кăнтăр енчи пайĕнче йывăçран хӳтлĕх тунă, унăн пăрăсĕсен вĕçне авалхи картинăсем çырнă стена ăшне шăтарса чикнĕ. Кăнтăр енчи стенара хĕçпăшалпа пемелли шăтăк тунă. Кăнтăр енчи стенасем çинчи картинăсене нумай тĕлте çĕмĕрнĕ.

Волотов хирĕнчи успени чиркĕвĕ Новгородăн XIV—XV-мĕш ĕмĕрхи архитектура памятникĕ пулнă. Çав чиркĕве нимĕçсем пĕтĕмпех ишсе антарнă, чул куписем хушшинчен халь стенасен юлашкийĕсем çеç курăнса тăраççĕ; çав чиркĕвĕн стенисем çинчи картинăсене XIV-мĕш ĕмĕрте çырнă пулнă, вĕсем краскăпа çырнă чи лайăх картинăсем пулнă, вĕсене питĕ нумай çын пĕлсе тăнă.

Ильин урамĕнчи спас преображени чиркĕвĕ XIV-мĕш ĕмĕрхи архитектурăн чи лайăх тĕслĕхĕсенчен пĕри пулнă. Вăл пуринчен ытларах хăйĕн стенисем çинчи картинăсемпе паллă пулнă, çав картинăсене XIV-мĕш ĕмĕрте Византири чаплă мастер Феофан Грек çырнă. Чиркӳ тăрринче тата хĕвелтухăç енчи стенан çӳлти пайĕнче оккупантсем пысăк шăтăксем тунă, чиркӳ çурчĕн хĕвеланăç енчи пайне ишĕлтернĕ, хĕвеланăç енчи варринчи маччине ишсе антарнă, кĕтессинчи маччисене шăтарнă. Çапла ишĕлтернине пула кăнтăр-хĕвеланăç енчи кĕтесĕ çурăлнă. Стенасем çинчи картинăсен чылай пысăк пайĕ пĕтнĕ, тăрса юлнисене те нимĕç салтакĕсем пăсса пĕтернĕ.

Фашистсем XII-мĕш ĕмĕрти вырăс искусствипе пĕтĕм тĕнчери искусствăн чаплă памятникне — спас-Нередица чиркĕвне ишĕлтернĕ. Çав чиркĕвĕн шалти стенисем çинче пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăракан чаплă картинăсем пулнă. Вăл Византийăн тата вырăссен XII-мĕш ĕмĕрте çырнă картинисен пĕртен пĕр памятникĕ пулнă. Çав чиркĕве нимĕçсем пĕтĕмпех ишĕлтернĕ. Çак памятник пĕтсе ларни вырăссен культурипе пĕтĕм тĕнче культуришĕн питех те пысăк çухату пулса тăрать.

## Мирлĕ совет гражданĕсене тата тыткăна лекнĕ çынсене вĕлерсе пĕтерни

Ятарласа тунă комисси нимĕç оккупанчĕсем мирлĕ совет гражданĕсемпе тыткăна лекнĕ çынсене план тăрăх вĕлерсе пынине кăтартакан фактсене питĕ нумай палăртнă. Колмоври психиатри больницинче 800 çын выртнă. 1941 çулхи ноябрьпе декабрьте гитлеровецсем çав çынсене пурне те вĕлернĕ. 1941 çулхи октябрьте фашистла ирсĕрсем Хутынь больницинче выртнă 250 çынна асаплантарса вĕлернĕ. Кшентицы тата Зеолешье ялĕсенче гитлеровецсем 30 çынна вĕлернĕ, çав çынсем хушшинче хĕрарăмсемпе стариксем тата кăкăр ĕмекен икĕ ача та пулнă. Мирлĕ пурăнакан совет халăхне, чирлĕ маррисене те, вĕлерсе пĕтернине кăтартакан нумай факта палăртнă. Çапла, «Заверяжские Покосы» совхозра 1942 çулхи çуркунне нимĕçсем Новгород çыннине Семен Васильевич Масальскипе хăйĕн арăмĕпе тата тăванĕсемпе пĕрле персе вĕлернĕ. Çав совхозрах нимĕçсем тата 25 çынна персе вĕлернĕ, пуринчен ытла хĕрарăмсемпе ачасене вĕлернĕ. Жестяная Горка ялĕнче нимĕçсен карательнăй отрячĕ мирлĕ пурăнакан 2.000 çынна ытла вĕлернĕ.

Новгород районĕнче нимĕçсем тыткăна лекнĕ совет çыннисем валли 10 лагерь тунă, унта бараксемпе сарайсем çеç пулнă. Çав лагерьсем «Заверяжские Покосы», «Чайка» совхозсенче, черепица заводĕнче, Вяжище, Люболяды, Григорово ялĕсенче тата ыттисенче те вырнаçнă. Тыткăна лекнĕ çынсене çав лагерьсенче санитари енчен калама çук йывăр условисенче пурăнтарнă, вĕсене хĕнесе, асаплантарнă. Выçă пурăннипе, питĕ йывăр ĕçлеттернине, пере-пере вĕлернине пула, Новгород районĕнчи 6 лагерьте кăна тыткăна лекнĕ 5.000 çынтан 1943 çул вĕçне 336 çын кăна чĕрĕ юлнă.

Фашистла нимĕç ирсĕрĕсем совет çыннисене, уйрăмах та хăйсен аллине лекнĕ çар çыннисене, хаяррăн асаплантарнă. Осия ялĕнче комисси тыткăна лекнĕ совет çыннисен 30 виллине тупнă, вĕсем çинче çав çынсене асаплантарнин йĕрĕсем пулнă. Çав çынсенчен çаксене палласа илнĕ: А. Ф. Калмыков лейтенанта, М. Г. Попов ефрейтор, М. И. Ситник боеца тата ыттисене те.

Малое Подосенье ялĕнче пурăнакан Даниил Федорович Кузнецов комиссие çапла каласа кăтартнă: «Тыткăна лекнĕ çар çыннисем çул çинче ĕçлетчĕç; вĕсем выçăччĕ, шыçăнса кайнăччĕ; лагерьтен вилнисене кашни çĕрех йăтса тухатчĕç. Эпĕ çынсем ĕçленĕ çĕртех вилнине куртăм. Нимĕç конвоирĕсем пăшалсăр пуçне тата чукмарсем тытса çӳретчĕç. Совет çыннисене хĕнесси вĕсен яланхи ĕçĕ пулнă». «Заверяжские Покосы» совхозра пурăнакан пĕр хĕрарăм çапла каласа панă: «Ӳкекен совет çыннисене нимĕç салтакĕсем ĕçленĕ çĕртех е çул çинчех персе вĕлернине эпĕ хам та курнă».

Хирти жандармерин тыткăна лекнĕ унтер-офицерĕ Ионда комиссие çапла каласа панă: «Нимĕçсем тыткăна лекнĕ совет çыннисене нумай вĕлернине эпĕ пĕлнĕ. Вĕсем чирлисене, вăйсăррисене тата утма пултарайманнисене пере-пере вĕлернĕ».

## Совет гражданĕсене нимĕç чуралăхне хăваласа кайни

Нимĕçсен 1-мĕш авиаполевой дивизийĕн командующийĕ Вильке генерал-майор хушнипе, Новгород хулин нимĕç коменданчĕ Руф капитан 1943 çулхи сентябрьпе октябрьте тата ноябрьте мирлĕ пурăнакан темиçе пин совет гражданне вăйпа Германие хăваласа янă.

2-мĕш батальон штабĕн старши ефрейторĕ Хенген Роберт, тыткăна лекнĕскер, совет çыннисене ирсĕрлесе Германие хăваласа кайни çинчен çапла пĕлтернĕ: 1943 çулхи сентябрь уйăхĕнче хула коменданчĕ Руф капитан, дивизи обозĕн салтакĕсемпе усă курса, вырăссене пурне те Новгородран тата Новгород районĕнчен урăх çĕре куçарчĕ. Вырăссене хăйсен япалисене илме вăхăт виçĕ сехет çеç панă. Пирĕн батальонри салтаксем, çав çынсене ăсатнăскерсем, çапла каласа парчĕç: хăйсен тăван ялĕсенчен тухса каякан вырăс хĕрарăмĕсемпе ачисем макăрнине курсан чун çӳçенетчĕ».

Германие ĕçлеме кайма килĕшменшĕн фашистсем совет çыннисене хĕненĕ тата пере-пере вĕлернĕ.

Халăха нимĕç чуралăхне вăйпа хăваласа кайнине пула, Новгорода фашистла оккупантсенчен ирĕке кăларнă чухне унта мĕн пурĕ те 30 çын çеç пулнă, Новгород районĕнче 80.000 çынтан 900 çын çеç юлнă.

## Новгород районĕнчи государство предприятийĕсене тата колхозсене аркатни

Новгород районĕнче лайăх аталаннă ял-хуçалăхĕ, вăрман промышленноçĕ тата торф промышленноçĕ пулнă. Гитлеровецсем Новгород районне оккупациленĕренпе 96 яла çунтарса янă тата аркатса тăкнă. Пурăнакан 8.849 çуртран оккупантсем 5.630 çурта пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă, 1.705 çурта пăртак ишĕлтернĕ; 76 шкултан 75 шкула, çав шутра 3 вăтам шкула, 13 тулли мар вăтам шкула тата 59 пуçламăш шкула, çунтарса янă, çав шкулсенче 15.000 ача ытла вĕреннĕ пулнă; 3 больницăна, фельдшерпа акушерка пункчĕсене 10 пункта, ялсенчи 7 зооветпункта, вăрлăх тĕрĕслекен лабораторине, ветеринари лабораторине, инкубатор станцине, метеорологически станцие, 165 магазинпа ларека çунтарса янă; культура учрежденийĕсемпе халăха сутта кăларакан учрежденисене — клубсене, вулав çурчĕсене, ялти библиотекăсене тата ыттисене те нумайĕшне аркатса тăкнă; нимĕçсем тата кирпĕч завочĕсене, йывăç çуракан заводсене, торф предприятийĕсене пурне те çĕмĕрсе пĕтернĕ.

Гитлеровецсем Новгород районĕнчи колхозсене, предприятисене, учрежденисене тата халăха калама çук пысăк сиен тунă. Вĕсем Новгород районĕнчен 2.000 лаша ытла, 10.000 ĕне, 18.000 сурăхпа качака хăваласа кайнă; ялхуçалăх продукчĕсене, фуражна, мĕн пур ялхуçалăх инвентарьне, йывăç кĕреçесемпе кĕреплесем таранах, турттарса кайнă; Шолоховски, Никольски, Хутынски, Дубровски, Любецски, тата Котовитски ялсоветсене кĕрекен ялсенче пурăнмалли мĕн пур çуртсемпе хуçалăх хуралтисене пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ятарласа тунă комисси тĕпчесе пĕлнĕ чухне тупнă документсене, свидетельсем каланисене тата сиене асап курнисем каланисене пăхса тухса, Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси çакна палăртнă: вырăссен авалхи хулине—Новгорода, пĕтĕм тĕнчери çав тери чаплă искусствăн памятникĕсене юри ишĕлтерес, мирлĕ пурăнакан совет çыннисемпе тыткăна лекнĕ çар çыннисене йышлăн вĕлерсе пĕтерес, совет гражданĕсене Германие каторгăна хăваласа каяс ĕçе нимĕç çарĕн офицерĕсемпе салтакĕсем Гитлер правительстви хушнă тăрăх тата çак çынсем ертсе пынипе тунă: Германин 18-мĕш армийĕн командующийĕ Линдеман Георг генерал-полковник, Испанин 250-мĕш «Кăвак дивизийĕн» командирĕ Муньос Гранде генерал-майор, нимĕçсен 1-мĕш авиаполевой дивизийĕн командирĕ Вильке генерал-майор, нимĕçсен 1-мĕш авиаполевой дивизийĕн командирĕ Петраушке генерал-майор (ăна çав вырăна 1943 çулхи декабрь уйăхĕнче лартнă), Новгород хулин коменданчĕ Руф капитан.

Çав çынсен пурин те хăйсен тискер тунă преступленийĕсемшĕн çирĕп ответ тытмалла.

# Ют çĕршывсенче

### БРИТАНИ ДОМИНИОНĔСЕН ПРЕМЬЕР МИНИСТРĔСЕН КОНФЕРЕНЦИЙĔ

ЛОНДОН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, доминионсен премьер-министрĕсен виçĕ кун пынă конференцийĕ ĕнер вăрçă ларутăрăвне пăхса тухнă, вăл континентра наступлени тăвас ыйтусем тĕлĕшпе йăлтах калаçса татăлнă. Премьер-министрсем тата Японипе вăрçас плансене те сӳтсе явнă. Çар ыйтусене сӳтсе явса пĕтернĕ хыççăн премьер-министрсем тĕпчерпĕ кăткăс ыйтусене сӳтсе явма тытăнчĕç. Англин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден премьер-министрсене Англин тулашри политики çинчен каласа парĕ. Премьер-министрсем хăйсен правительствисен шухăшĕсене каласа парĕç.

### СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, майăн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен питĕ пысăк соединенийĕсем Майири (Франци) пысăк çар складне тапăннă. Ытти соединенисем тăшманăн Мондидьери тата Шатоденери склачĕсене тапăннă.

Çавăн пекех тата нимĕçсен Людвигсхафен хули çине бомбăсем пăрахнă. Çав мĕнпур операцисенчен хăйсен базисене 49 самолет таврăнман.

Ĕнер кăнтăрла союзниксен авиацийĕ нимĕçсен Па-де-Кале районĕнчи çар сооруженийĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официально çапла пĕлтереççĕ: «Либерейтор» йышши самолетсен пысăках мар соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, майăн 5-мĕшĕнче нимĕçсен Па-де-Кале районĕнчи çар сооруженийĕсене тапăннă.

Майăн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Хĕвеланăç Германири объектсене тапăннă.

### ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, фронтăн пур участокĕсенче те патрульсем кĕрешнĕ тата артиллери персе тăнă.

Иртнĕ каç союзниксен авиацийĕ Бухарестри объектсене тапăннă.

Ытти соединенисем тăшманăн Италири тата Югославири çыранĕсем патĕнчи çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: фронтăн чылай участокĕсенче патрульсем кĕрешнĕ тата артиллери персе тăнă, уйрăм тытăçусем пулса иртнĕ.

Çанталăк начар тăнă пирки авиаци вăйлă ĕçлеме пултарайман. Çапах та союзниксен самолечĕсем тăшманăн Италири объекчĕсене тапăннă, йывăр тата вăтам бомбардировщиксем Будапешта тапăннă.

### ИТАЛИ АДМИНИСТРАЦИНĔ ТАСАТНИ

ЛОНДОН, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви хăйĕн Неаполь хулинчи спецкорĕн пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: министрсен пайăнхи ларăвĕнче йышăннă решени тăрăх ыран-паянах Итали администрацине тасатма тытăнаççĕ. Ларура фашизм майлă çынсене пур обществăллă организацисенчен те тасатасси çинчен сӳтсе явнă.

### ОБЩИНАСЕН ПАЛАТИНЧЕ ИДЕН КАЛАНИ

ЛОНДОН, майăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден общинăсен палатинче çапла каланă: Британи правительствипе Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви «Испани правительствипе темиçе ыйту пирки калаçнă, çав ыйтусем тĕлĕшпе Испани правительствин позицийĕ ĕлĕкрех Испанин нейтралитетне хирĕç пынă пек туйăннă. Çак ыйтусене сӳтсе явнă: Танжерта Германин генеральнăй консулĕ ĕçлесе тăни тата Испани контрольлесе тăракан пĕтĕм территорипе Испани хăйĕн территорийĕнче Германи агенчĕсем ĕçлесе тăни; Хĕвелтухăç фронтĕнче Испанин хăшпĕр чаçĕсем халĕ те кĕрешни; Итали суднисене Испани порчĕсенче тытса чарни тата Испани Германие мĕн чухлĕ вольфрам ярса тăни. Çак калаçусем халь кăмăллă вĕçленнĕ, ĕнтĕ».

### КАНАДĂН СОВЕТ СОЮЗНЕ ПУЛĂШАС ТĔЛĔШПЕ ĔÇЛЕКЕН КОМИТЕЧĔН ĔÇĔСЕМ

ОТТАВА, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Торонто хулинче тухса тăракан «Стар» ятлă хаçат Канадăн Российăна пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен комитечĕн ĕçĕсем çинчен тĕплĕ çырнă отчетне пичетлесе кăларнă. Отчетра кăтартнă тăрăх, 1942 çулхи ноябрьтен пуçласа 1944 çулхи март уйăхне çитиччен комитет 5.673.884 доллар укçа пухнă. Ку таранччен комитет Совет Союзне 4.462.248 долларлăх тавар янă.

Ответлă редакторăн ĕçĕсене тăвакан**ĕ** П. Н. НИКОЛАЕВ.

Тимĕр тыттарнă çунасем сутлăх пур. Промышленность хакĕпе сутаççĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Ленина, 11, База Чувашторга.
2—2

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00007 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 ¢. б. 60Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.